# МОНГОЛСЕН ХАЛĂХ ПОЭЗИЙĔНЧЕН

## ВИÇШЕР ТУПСĂМЛĂ САВĂСЕМ

Мĕн-ха виçĕ япала
Кăвакки? Ватти калать:
Янкăр пĕлĕт кăн-кăвак,
Виртĕн тĕтĕмĕ кăвак,
Орхонра[1] хумсем кăвак.

Виçĕ тĕпсĕр япала
Мĕн пулать? Ватти калать:
Кăн-кăвак çак пĕлĕт тĕпсĕр,
Çыннăн ăсĕ-тăнĕ тĕпсĕр,
Çын айванлăхĕ те тĕпсĕр.

Мĕн-ха виçĕ япала
Чи çӳлли? Ватти калать:
Чĕрĕ шухăш питĕ çӳлĕ,
Кĕнеке ăс-халĕ çӳлĕ,
Пурăнăç саккунĕ çӳлĕ.

Мĕн вăл виçĕ япала
Пуянни? Ватти калать:

---

[1] Орхон — Монголири юханшыв ячĕ.

Пирĕн çĕр-анне пуян,
Пысăк йышлă кил пуян,
Нумай пĕлнĕ сын пуян

Халĕ виçĕ усала
Тупса пар. Ватти калать:
Тимĕре — йĕкев усал,
Хир çĕленĕ пит усал,
Тăшман янă сын усал.

Мĕн вăл виçĕ япала
Ултавли? Ватти калать:
Ту хушшинчи сас ултавлă,
Курнă тĕлĕк йалт ултавлă,
Уй-хирти мираж ултавлă.

Мĕн-ши виçĕ япала
Хăвăртти? Ватти калать:
Çурхи çил вĕççи пит хăвăрт,
Ырă ут юртти пит хăвăрт,
Ăслă çын шухăшĕ хăвăрт.